26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
АПРЕЛЬ
23
ЭРНЕКУН
86(6323) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ПЫСĂК ПАХАЛĂХПА, ХĂВĂРТ АКМАЛЛА

Республикăри колхозсенче çуркуннехи уйхир ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ. Паянхи куна республикăри пур районсенче те çураки ĕçĕсем пуçланчĕç.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илессин ответлă вăхăчĕ пуçланчĕ. Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен коммунистсемпе комсомолецсем, колхозниксемпе колхозницăсем тата МТС работникĕсем тăван çĕршыв умĕнче, Хĕрлĕ Çар умĕнче экзамен тытаççĕ. Пирĕн умра питех те кирлĕ тата ответлă задача тăрать, вăл—çуракине вăхăтра, пысăк пултарулăхпа туса ирттересси. Умра тăракан çак задачăна ялхуçалăхĕнчи кашни ĕççыннин тĕплĕн ăнланмалла.

Çураки ĕçĕсене ирттерме кăçал нумай колхозсем тĕплĕн те лайăх хатĕрленсе тухрĕç. Анчах уйхир ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пырасси чи малтан çынсем ĕçленинчен килет, колхозниксемпе колхоз руководителĕсем çуракинче пултаруллăн ĕçленинчен килет. Вăрçă пирки пулнă йывăрлăхсене çынсен ĕçри тимлĕхĕпе ăсталăхĕ çĕнтермелле, вĕсем çураки ĕçĕсене малтанхи кунсенчен пуçласах пысăк хăвăртлăхпа туса пымалла, çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тăвассине чи малти вырăна хурса, агротехника кăтартăвĕсене вĕçне çити тата тĕрĕс пурнăçа кĕртмелле.

Уйхир ĕçĕсен малтанхи кунĕсем колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхĕ кăçал татах та пысăк пулнине кăтартса параççĕ. Республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премие пани колхозсене çураки ĕçĕсене пуçланă вăхăтра пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çак чыпа хавхаланса 1943 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене, отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракие пысăкрах хастарлăхпа пуçларĕç.

Елчĕк районĕнчи колхозсем çуркуннехи уйхир ĕçĕсене апрелĕн 10—11-мĕшĕсенче туса вуна талăк хушшинче 1326 гектар тырпул акрĕç. Вăрнар районĕнчи колхозсем çак хушăра 900 гектар çĕре тырпул акма сухаласа хатĕрлерĕç, 400 гектар тыр акрĕç. Çавăн пекех Чкаловски, Первомайски, Комсомольски районĕсенчи колхозсем те çураки ĕçĕсене вăйлатса пыраççĕ.

Çураки хатĕрленес ĕçе хăй вăхăтĕнче пысăк ответлăхпа туса пынă май, Елчĕк, Вăрнар районĕсенче уйхир ĕçĕсен пахалăхне малтанхи кунсенчен пуçласах тивĕçлипе пулса пырать. Иртнĕ çулта тунă йăнăшсене çирĕп шута илсе, ку районсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсем, çĕрĕç органĕсемпе МТС политотделĕсем çуркуннехи уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ. Елчĕк районĕнчи колхозсем вăрлăха яровизацилесе акаççĕ, малтанхи кунах тырра сеялкăсемпе акма тытăннă. Кашни сеялкăна ĕçе кăларнă, апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне колхозсенче пурĕ 2865 центнер вăрлăха яровизацилеме хунă. Ворошилов ячĕпе тăракан, «КИМ» колхозсем тăпра типсе пынă май 40—45-шер гектар тырă акнă. Тырра вĕсем яровизацилесе тата пурне те сеялкăсемпе акнă. Сухаçăсем, акакансем талăкри ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултарса пыраççĕ. Бригадăсем, звеносем ăмăртаççĕ, уйхирте ĕç ирех пуçланса тĕттĕм пуличченех хĕрÿллĕн пырать.

Районра кашни колхозра пекех столовăйсем ĕçлеççĕ, ĕçлекенсем талăкра икĕ хутчен пĕрлешÿллĕн апатланаççĕ. Агитмассăллă ĕç уя куçрĕ. Бригадăсенче боевой листоксем тухаççĕ, кану вăхăтĕнче хаçатсем вуласа параççĕ.

Анчах, çуракин малтанхи кунĕсенче уйрăм районсемпе колхозсенче çитменлĕхсем те палăрчĕç. Вĕсене вăхăтра пĕтермелле.

Калинино районĕнче çуракин малтанхи кунĕсенче ĕç пахалăхĕ çине çиелтен пăхса йăнăш турĕç. Тунă йăнăшсене халĕ колхозсем ăнăçлăн тÿрлетсе пыраççĕ. Çапах та вăл пур колхозсемшĕн те урок пулса тăмалла.

Çакăнпа пĕрлех Калинино районĕнчи хăшпĕр колхозсенче вăрлăха акаччен яровизацилессишĕн, имçамсемпе сăвассишĕн кирлĕ таран тăрăшманнине те палла тумалла. «Путь Ленина», «КИМ», «Броневик» колхозсем тырра яровизацилемесĕр, имçамсемпе сиплемесĕр акаççĕ.

Тырă акма республикăра массăллăн тытăнас вăхăт çитсе тăчĕ. Анчах та чылай колхозсенче кĕрхи тырăсем çине клевер акса хăварас, кĕрхи тырăсене удобрени парас тата вĕсене сÿрелес ĕçсене вĕçне çитиччен пурнăçламан-ха. Клевер акмалли плана республика апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне 57,6 процент, кĕрхи тырăсене удобрени памалли плана 35,1 процент çеç тултарнă. Анчах Çĕмĕрле районĕнче апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ те 37 гектар çеç клевер акнă. Ку вăл плана 4,6 процент тултарни пулать. Çĕмĕрле районĕнче çак ĕçе пĕрре те кирлĕ хăвăртлăхпа сарăлса пымаççĕ.

Çураки ĕçĕсене организованно туса ирттермелле. Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхне çĕклесе ĕç тухăçлăхне ÿстермелле. Çурхи кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курса ĕçе хăвăрт туса пымалла. Тракторсемпе, ялхуçалăх машинисемпе пĕтĕмпех усă курса, колхозсен пĕтĕм вăйне ĕçе мобилизацилесе, майăн 1-мĕшĕччен тĕштырăсене акас ĕçре татăклă çитĕнÿсем тумалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 20-мĕшĕнче фронтсенче палла улшăнусемех пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 2 транспортне путарнă.

* * *

Кубань çинче пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн хаяр контратакисене сире-сире пăрахнă. Танксем тата авиаци пысăк вăйĕсем пулăшнипе кĕрешекен нимĕç пехоти, темиçе хут тапăнса пăхнă пулин те, пирĕн оборонăна нихăш участокра та татса кĕме пултараймарĕ. Гитлеровецсен пĕр пур атакисене те сирсе ярса, вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр кун хушшинче зениттăй артиллерипе пехота нимĕçсен 12 самолетне персе ÿкернĕ. Кунсăр пуçне аэродром çинче тăшманăн 11 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче сайра-хутран пĕр-пĕрин çине перкеленĕ. Пирĕн чаçсем артиллерипе минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе, нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, артиллери батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарнă. Снайпер старшина Константин Бондаренко хăйĕн ученикĕпе Александр Логинов красноармеецпа пĕрле засадăна кĕрсе ларнă. Боецсем часах 2 гитлеровеца курса вĕсене вĕлерсе тăкнă. Пирĕн снайперсене асăрхасан, тăшман пулеметсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Нимĕç салтакĕсен 2 ушкăнĕ снайперсене хупăрласа илме тытăннă. Бондаренкопа Логинов танмар çапăçăва хутшăнса 17 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнче Чернов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ позицине сасартăк атакăланă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе, пирĕн боецсем çав вырăнта чи çÿллĕ высотана йышăнса илнĕ. Çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе, тăшман 6 хутчен контратака тунă, анчах кашнинчех унăн каялла чакмалла пулнă. Çав высота патĕнче гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсен 400 çити вилли выртса юлнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пĕр чаçăн артиллерисчĕсем нимĕç дзотне, наблюдательнăй пункта, 2 огневой точкăна тата боеприпассем тиенĕ автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн минометчиксем тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем çине персе, нимĕç пехотин пĕр ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри Богдан Хмельницкий ячĕпе хисепленекен партизансен отрядне хирĕç нимĕçсем карательнăй экспедици янă. Партизансем пĕр ушкăнĕ тăшмана хирĕç çапăçма пуçласа унăн тĕп вăйне хăй çинелле илсе тăнă. Çав вăхăтра партизансен тепĕр ушкăнĕсем гитлеровецсене çичĕ флангсенчен атакăлама пуçланă. 50 çын вилнĕ тата 70 çын аманнă хыççăн тăшман чакма пуçланă. Каялла чакакан тăшман хыççăн хăваласа пырса, партизансем район центрне вăрçăпа кĕнĕ те нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă, çар хатĕрĕсен 4 складне аркатнă. Халăха тĕштырă та апат-çимĕç нумай валеçсе панă.

* * *

Аялархара нимĕçсен фашистла ирсĕрсем Краснодар крайĕнчи Красноармейская станицăра тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç палачĕсем пĕр айăпсăр вуншар станичниксене пере-пере пăрахрĕç. Кашни кунах нимĕçсем кил-çуртсене пырса кĕрсе, мирлĕ гражданссене хăйсемпе пĕрле илсе каятчĕç. Вăл çынсем пачах, çухалатчĕç. Красноармейская станицăна гитлеровецсенчен тасатнă хыççăн апрелĕн 1-мĕшĕнче хула тулашĕнче шыв тултарнă 3 шăтăка тупса палăртнă. Вăл шăтăксенче гитлеровецсем асаплантарнă станичниксен 53 виллине тупнă. Пирĕн куç умне çав тери тискер япала куранса кайрĕ. Вĕлерес умĕн нимĕç çынвĕлеренĕсем совет гражданĕсене калама çук тискеррĕн асаплантарнă. Надежда Ладыгина врача тискерсем персе вĕлериччен малтан аяк шăммисене хуçнă пулнă. Фашистла тискерсем Ладыгинăн 10 уйăхри ачине те асаплантарса вĕлернĕ. Вăл ачан ÿчĕ пĕтĕмпех юнланса пĕтнĕ. Отечественнăй вăрçă инвалидне, Ефим Курлов колхознике тата Григорий Нечаев колхознике те çавăн пекех вĕлернĕ. Григорий Нечаевăн 3 ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта. Фашистла пуçкасакансен аллинчен Иван Абрамов тата унăн арăмĕ Анна Прокопьевна, район больницинчи медсестра Мария Орлова, колхозник Тихон Любушкин тата ыттисем те пĕтнĕ. Казаксен станицинчи çĕнĕ йăлапа тата культурăпа çыхăнса тăракан япаласене пурне те нимĕçсем пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсем 5 вăтам шкулăн тата пуçламĕш шкулсен çурчĕсене çунтарса янă. Фашистла тискерсем ялхуçалăх техникумĕн библиотекине, районри больницăна, унăн мĕнпур оборудованийĕпе тата инструменчĕсемпе пĕрлех, культура çуртне тата пурăнмалли темиçе вуншар çуртсене çунтарса янă. Хĕрлĕ Çар боецĕсенчен эпир совет çыннисен юнĕшĕн, стариксем, хĕрарăмсемпе ачасем вилес умĕн тискеррĕн асапланнишĕн, гитлерла ирсĕрсем пирĕн совет çĕрĕ çинче тунă тискер аркатусемшĕн фашистла бандитсене, пĕтерме ыйтатпăр». Станицăра пурăнакан çынсем хушнипе акт çине çаксем алă пуснă: П. Кущевский, П. Буримов, вăтам шкул директорĕ М. Сытник, библиотекарь О. Чеканова, учительница М. Курлова, Совет Союзĕн Геройĕн капитан Николай Дудинăн ашшĕ — колхозник Максим Дудин, колхозница Дерновская.

Апрелĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 21-мĕшĕнче фронтсенче палла улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 20-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтернĕ, артиллерин 6 батарейине пусарнă, тăшманăн хуралра çÿрекен карапне, транспортне тата десант антаракан 2 суднине путарнă.

* * *

Кубань çинче пĕр соединенин чаçĕсем тăшманăн чылай пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире пынă. Гитлеровецсем совет позицийĕсене пĕрмаях атакăласа тем пулсан та çитĕнÿсем тăвасшăн пулнă. Çапăçу питĕ хĕрсе кайнă вăхăтра совет самолечĕсем тăшманăн наступлени тăвакан чаçĕсене вирлĕн пырса тапăнса, ăна пит пысăк çухатусем кÿнĕ. Хаяр çапăçу пулнă хыççăн нимĕçсен пур атакисене те сирсе пăрахнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче артиллерипе минометсенчен перкелесе тăнă. Пирĕн чаçсем нимĕçсен 3 минометне пĕтерсе тăкнă тата артиллерин 2 батарейине пусарнă. Хăшпĕр участоксенче нимĕçсем çапăçса разведка тума хăтланнă. Пирĕн подразделенисем персе тăнипе гитлеровецсен разведка тăвакан отрячĕсене сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чугуевран çурçĕртерехре совет артиллерийĕ нимĕçсен пĕр танкне персе çĕмĕрнĕ тата тăшманăн боеприпассем хунă темиçе складне вут тĕртнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем тăшманăн артиллери батарейине тата 6 блиндажне аркатса тăкнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши самолетне ÿкернĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче старши лейтенант Мальцев тата лейтенант Степанов командир пулса ертсе пыракан разведчиксен икĕ группи тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Артиллерирен персе тăнипе хÿтĕленсе, пирĕн боецсем икĕ енчен нимĕç траншейисене кĕрсе кайнă та 60 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн снайперĕсем юлашки кунсенче 108 гитлеровеца вĕлернĕ. Снайпер Блинов юлташ пĕр кун хушшинче 9 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Украина партизанĕсен отрячĕ паллă чугунçула хурал тăракан нимĕçсене тапăннă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăннине пула гитлеровецсем вĕсене хирĕç кĕрешме те пултарайман. Партизансем тăшманăн 40 салтакне пĕтерсе тăкнă, ыттисем тарса пĕтнĕ. Ятарласа уйăрнă подрывниксем минăсем лартса кĕпере сирпĕнтернĕ. Тăшманшăн питĕ паха чугунçулăн çак участокĕнче поездсем çÿреме чарăннă.

* * *

Югослави партизанĕсем темиçе хула йышăнса илнĕ. Оточацпа Бриньере патриотсем пĕр миллион çурă патрон, икĕ вагон снаряд, 13 пин литр бензин тата нумай хĕçпăшал тытса илнĕ. Невесино хули патне шăтарса тухнă тăшманăн вăйлă колоннине партизансем аркатса тăкнă. Хулана гитлеровецсенчен пĕтĕмпех тасатнă. Вилнисене кăна шутласан та тăшманăн 100 ытла салтакпа офицерĕ пĕтнĕ. Словени Приморьинче партизансем итальянецсен тĕреклетнĕ вырăнĕсене ăнăçлăн тапăннă. 80 итальянеца пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 69 салтакне тыткăна илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче—14 пулемет, 100 винтовка тата патронсем нумай.

И. В. Сталин юлташ Мексика посланникне Л. Кинтанийа господина йышăнни

Апрелĕн 20-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Мексикăн ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй посланникне тата Полномочнăй министрне Л. Кинтанийа господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Пирĕн самолетсем Тильзит хулине тапăнни

Апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем Тильзит хули çине массăллăн вĕçсе пырса тапăннă, çав хулари промышленноçпа çар объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула хулара нумай пушарсем тухнă, вĕсем каярахпа пĕрлешсе кайнă та вăйлă вут-хĕм вучахĕ пулса тăнă. Пушар çулăмĕ 150 километра яхăн курăннă. Çавăн пекех тата вăйлă взрывсем пулни палăрнă, вĕсем уйрăмах боеприпассен склачĕсем вырнаçнă районра, чугунçул узелĕн территорийĕнче, юханшыв портĕнче тата аэропортра нумай пулнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен базине таврăннă.

КРАСНОДАРТАН ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ СЫВЛĂШРИ ÇАПĂÇУСЕМ

Апрелĕн 20-мĕшпе 21-мĕшĕнче нимĕçсен авиацийĕ пирĕн войскăсем çине тата Краснодартан хĕвеланăçнерехри çар объекчĕсем çине массăллăн вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Пирĕн сывлăшри вăйсем, çав тапăнусене ăнăçлăн сирсе ярса, хăйсен черечĕпе, противникăн войскисемпе çар объекчĕсем çине массăллăн вĕçе-вĕçе пырса тапăннă тата вĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Икĕ кун хушшинчи сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 98 самолетне персе ÿкернĕ. Çав вăхăтрах пирĕн 42 самолет пĕтнĕ.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ЦК ВЛКСМ-ра

ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ ремесленнăй тата чугунçул училищисемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен, унта ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи пĕрремĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Чăваш республикинчи 1-мĕш номерлĕ чугунçул училищи (директорĕ Вельчинский, директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Розенберг, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Волчок юлташсем) лайăх ĕçленине палăртнă.

ÇУРАКИНЕ ĂНĂÇЛĂН ТУСА ИРТТЕРНИ—ТĂШМАНА ÇĔНТЕРМЕ ХĔРЛĔ ÇАРА ПУЛĂШНИ!

„Трудовик" колхоз çуракине массăллăн тытăнчĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, апрелĕн 21-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Çураки ĕçĕсем районра кунран кунах сарăлса пыраççĕ. Паян районри 32 колхоз суха тума тухрĕç. Районра пĕтĕмпе 774 гектар çĕре сухаласа тырă акма хатĕрленĕ. Паянхи кун тĕлне 316 гектар тĕштырăсем акнă, вуншар гектар кок-сагыз акса хăварнă тата пахча-çимĕçсем акма тытăннă.

«Трудовик» колхозра çураки ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Вăл колхоз çуракине массăллăн тытăнчĕ. Клевер акмалли плана тултарнă хыççăн колхоз 42 гектар çуртырри акрĕ. 18 центнер вăрлăха яровизаци туса, 16 центнер вăрлăха имçамсемпе чÿхесе акнă. Уйрăмăнах колхозри 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем лайăх ĕçлеççĕ. 3-мĕш бригада 18 гектар акрĕ.

Çамрăк колхозниксем ĕçре пример кăтартаççĕ. Çамрăк плугарь Сюсюкин юлташ кашни кунах 2-шер гектар, В. Матросов 1,6 гектар, А. Сидуков 1.6 гектар сухалаççĕ. Сеяльщиксем К. Александров, Разбойкин юлташсем нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Районра нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшас ĕç те сарăлса пырать. Паянхи кун тĕлне çак ĕçе 11 колхоз хутшăнчĕç. Ирĕке тухнă районсене пулăшма пĕтĕмпе 15 сурăх, 16 сысна, пĕр ĕне, 2 пăру панă тата 86 пăт тырă пухăннă.

Чăваш республикине Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă майпа районри колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. Хĕрлĕ ялав илни районри колхозниксемпе колхозницăсене пысăк çĕкленÿпе ĕçлеме хавхалантарать.

П. Васильков,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Хĕрарăмсем—колхозра пысăк вăй

Хĕрарăмсемпе хĕрсем, халĕ колхозра пĕтĕм ĕçе татса паракан пултаруллă, пысăк вăй пулса тăчĕç.

Вăрçăччен вĕсенчен нумайĕшĕ сухаçă та, сÿреçĕ те пулса ĕçлемен, тырă та акман. Халĕ, отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра, хĕрарăмсем çак ĕçсене пурне те пултаруллă туса пыраççĕ. Анна Семенова, Дария Иванова, Татьяна Степанова, Мария Петрова колхозницăсем халиччен нихăçан та тырă акса курман. Тырă акасси—арçын ĕçĕ шутланнă. Кăçал вĕсем 8 гектар клевер акса хăварчĕç, ытти тырăсене те пысăк пахалăхпа акма хатĕрленеççĕ.

—Хальхи тапхăрта ĕçрен хăраса тăма вăхăт çук, начар ĕçлеме намăс. Лайăх ĕçлеме вĕренес пулать, мĕншĕн тесен пирĕн упăшкасем фронтра начар мар çапăçаççĕ. Хĕрлĕ Çар сĕмсĕр тăшмана хирĕç паттăр çапăçать, пирĕн ĕçре вĕсенчен кая юлмалла мар,—теççĕ колхозницăсем.

Кĕрхи тырăсем юртан тасалсанах, ирхи шăнтнă вăхăтпа усă курса, колхозницăсем калчасене мульчировани турĕç. Калчасем çине витме улăм туранă çĕрте пурĕ 11 хĕрарăм ĕçлерĕç. Уя пурĕ 53 хĕрарăм тухса 20 гектар çинчи кĕрхи тырăсене мульчировани турĕç.

— Хĕрарăмсем çине эпир пысăк шанчăк хуратпăр, вĕсем хастарлăн ĕçлени кăçал пĕтĕм ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать, — тет Степан Разин ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕ Ф. Андреев юлташ.

Колхозăн çамрăк бригадирĕ Марина Григорьева ирхине ĕçе 5—6 сехетре тухать те çĕрле 12 сехетре тин килне таврăнать. Вăл çурхи кунсене тем пекех кĕтнĕ. Бригадирта ĕçлесе Григорьева кăçалхипе иккĕмĕш хут çураки ирттерет. Çуракине бригада кăçал иртнĕ çулхинчен нумай хут лайăхрах та тĕплĕнрех хатĕрленчĕ. Бригадир пĕлет: тырпулăн тухăçлăхĕ ăна лайăх акса хăварнинчен килет. Кăçал бригада паха вăрлăхсем çеç акать.

— Иртнĕ çулта эпир гектартан 14 центнер, уйрăм участоксенче 16—17-шер центнер тырă туса илнĕ. Кăçал вăрлăхсем иртнĕ çулхинчен лайăх. Çуракине ăнăçлăн ирттерсе кăçал эпир кашни гектартан 16-шер центнер тырă туса илетпĕр, — тет бригадир.

Марина Михайлова, Матрена Михайлова, Матрена Кондратьева, Наталия Алексеева колхозницăсем суха тумалла. Кашниех вĕсем ĕç нормине кулленех 150 процентран кая мар тултарса ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ. Ĕçе тухма пурте хатĕр, хăйсем ĕçлемелли лашасене уйрăмăн пăхаççĕ. Сухаçăсем хăйсен ĕçне тĕплĕн пĕлеççĕ, агрокружокра вĕреннĕ.

Нина Григорьева иртнĕ çулта сÿреçĕ пулса ĕçленĕ, кăçал та çав ĕçрех. Вăл хăй ĕçĕн мастерĕ. Григорьева юлташ иртнĕ çулта стахановла ĕçленĕ — 224 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Çĕршыв валли вăрман каснă çĕрте ĕçленĕ, оборонăллă строительствăра ĕçлесе вăл Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине илнĕ. Кăçал Нина иртнĕ çулхи пек мар, тата вăйлăрах ĕçлеме, 300 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе тума шутлать.

Дария Иванова колхозница уйхирте фронтри воинсем пек ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл кăçал арçын вырăнĕнче ĕçлет, арçын ĕçне тăвать—тырă акать.

Ялти ватă колхозниксем хĕрарăмсен ĕçне тивĕçлипе ырлаççĕ. Вĕсен мастерлăхĕпе, пултарулăхĕпе, вĕсен ĕçченлĕхĕпе мухтанаççĕ. Колхоз хĕрарăмĕсем, хĕрĕсем нимĕнле ĕç умĕнче те хăраса тăмаççĕ. Колхоз хĕрарăмĕсем отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине туса ирттерес ĕçре пысăк хастарлăх кăтартĕç. Таса та шултăра вăрлăхсем акса çуракине пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн, тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли тырпул нумайрах туса илессишĕн вĕсем фронтри пек ĕçлеççĕ.

С. Шадин. (Хамăр корр.).
Красноармейски район.

Агитколлективсем çуракинче

ТАВАЙ, апрелĕн 21-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри чылай колхозсем çуракине тухрĕç. Паян уйхир ĕçĕсем районри 18 колхозра пыраççĕ. 36 гектар кок-сагыз, 27 гектар тĕштырă тата пăрçа акнă. Яровизацилеме 370 центнер тырă хунă, 798 центнер тырра имçамсемпе сăвса, акма хатĕрлесе хунă.

Çураки вăхăтĕнче колхозсемпе колхозницăсем хушшинче агитмассăллă ĕçе туса пыма ялсоветсенчи агитколлективсем ĕç планĕсем туса хатĕрлерĕç.

«Сталь» колхозра агитколлектив çураки ĕçĕсене активлăн хутшăнчĕ. Агитаторсем çуракинче хăйсем пример кăтартса ĕçлеççĕ, бригадăсенче боевой листоксем кăлараççĕ, хаçатсенчи хыпарсене вуласа параççĕ. Çуракине тухнă кунах колхозăн стена хаçачĕ тухрĕ. Агитаторсен руководителĕ, отечественнăй вăрçă инвалидĕ В. Чайкин юлташ ертсе пынипе кунта ĕç хыççăн колхозниксем правленине пухăнаççĕ. Унта талăкри ĕçĕн итогне тăваççĕ. Кам тата хăш бригада, звено мĕнле ĕçленине палăртаççĕ. Çапла туни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне çĕклет, кая юлса пыракансене лайăхрах ĕçлеме мобилизацилет.

Г. Куракин.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вулав çурчĕ уçрĕç

КАНАШ. Киров ячĕпе тăракан колхозра çак кунсенче вулав çурчĕ уçрĕç. Ун валли Катек ялсовечĕ тĕрлĕрен кĕнекесем 400 тенкĕлĕх ытла илсе пачĕ.

Вулав çурчĕ хăйĕн ĕçне планпа туса пырать.

Т. Владимиров.

Çуракинче тӳрĕ кăмăлпа, ырми-канми ĕçлĕр!

(Действующи Çартан килнĕ çыру)

Юлташсем! Отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех пуçласах чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсем, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсемпе пĕрле, хайсен чысĕпе ирĕклĕхĕшĕн тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ.

Пире, чăваш халăхĕн ывăлĕсене, иксĕре вĕçекен йывăр бомбардировщикăн авиаци чаçĕнче службăра тăма пысăк тивĕçлĕх тухрĕ. Эпир продовольствипе боеприпассем туртарса парса тăракан пирĕн хăватлă сывлăш карапĕсем пĕр хутчен мар ĕнтĕ Берлин, Кенигсберг, Будапешт, Бухарест хулисенчи çарпа промышленноçть объекчĕсене сывлăшалла сирпĕтернĕ. Пирĕн хĕрлĕ çăлтăрла хурçă кайăксем нимĕç захватчикĕсемшĕн аçа-çиçем пулса тăраççĕ. Çавăнпа эпир, чăвашсем, хамăрăн мухтавлă экипажсене продовольстви, вĕсен юратнă машинисене — горючи, йывăр авиабомбăсем йĕркеллĕ парса тăрассишĕн мĕнпур вăя хуратпăр.

Халăх пире автомашинăсем тата ытти хĕçпăшал шанса панă. Эпир вĕсене лайăх упратпăр, юсавлă тытса тăратпăр. Красноармеец-отличниксен Скворцов, Федоров, Гусева юлташсен автомашинисем ватам ремонт тумасăр 40.000-шер километр ытла çӳренĕ хыççăн та юсавлах. Çак юлташсене вĕсен хăйсен обязанноçĕсене тӳрĕ кăмăлпа тата тĕрĕс пурнăçа кĕртнишĕн командование темиçе хутчен те тав турĕ.

Эсир, колхозникĕсемпе колхозницăсем, çуркуннехи уйхир ĕçĕсене хĕрӳллĕ тапхăрĕ кĕтĕр. Партипе правительство сирĕн умма пысăк задачăсем лартрĕç. Вăл задачăсене пурнăçа кĕртнинчен фашистла çынсене аркатса тăкас ĕçĕн çăлăнăçĕ килет. Сирĕн çурхи уйхир ĕçĕсене хăвăрт та пысăк пахалăхпа туса ирттерме, вăрçă вăхăтĕнчи пысăк тыр-пул пухса илме кирлĕ. Кирек мĕнле пулсан та, колхоз уйхирĕсене кăтартнă срокра, сортлă вăрлăхпа тата агротехникăна пурнăçа кĕртсе акса хăвармалла. Çураки ĕçĕсенче çакна асра тытăр: кашни килограмм тырă вăл — тăшмана аркатакан хăрушă снаряд пулса тăрать.

Колхозникĕсемпе колхозницăсем! Эпир сире колхозсен анлă уйхирĕсенче тӳрĕ кăмăлпа тата ырми-канми, вăрçă вăхăтĕнчи шута илсе ĕçлеме чĕнетпĕр.

Кам халĕ ĕçрен пăрăнма шутлать. Совет Союзĕн экономикăлла тата оборонăллă вăй-хăватне тĕреклетессишĕн мĕнпур вăйран тăрăшмасть, çак ирĕксĕрех тăшмана пулăшать. Çавăнпа ун пек çынсем пулма кирлĕ мар.

Эпир, хамăр енчен, çапăçура мĕнпур вăя хурса кĕрешме сăмах паратпăр. Сире пирĕнпе хĕрелмелле мар пулĕ. Эпир чăваш халăхĕн ятне çӳлте тытатпăр. Кирлĕ пулсан, эпир тăшмана çĕнтерессишĕн хамăр пурнăçа та шеллемĕпĕр.

Совет Союзĕн Геройĕ подполковник Пусэп командир пулса тăракан чаçри чăваш боецĕсем хушнипе — **А. Ф. Федоров, С. К. Скворцов, Г. С. Гусев, В. А. Блинов, И. Е. Пегасов.**

Ăмăртура мала тухакан финанс отделĕсене премисем памалла тунă

Финанс органĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене килĕшӳллĕн, Чăваш АССР Совнаркомĕ Республикăри финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче мала тухакан финанс отделĕсене çакăн пек премисем памалла тунă:

Пĕрремĕш вырăн йышăннă финанс отделне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата ĕçре палăрнă работниксене премилеме 7.000 тенкĕ укçа параççĕ;

Иккĕмĕш вырăн йышăннă финанс отделне — 5.000 тенкĕ укçа параççĕ;

Виççĕмĕш вырăн йышăннă финанс отделне —3.000 тенкĕ укçа параççĕ.

Финанс работникĕсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене апрель уйăхĕнчен пуçласа пĕтĕмлетме тытăнаççĕ.

Плана ирттерсе тултараççĕ

ЙĔПРЕÇ. Участоксенчи налог инспекторĕсемпе финагентсем районри ĕççынисен хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Район пĕрремĕш квартал финанс планне 122,9 процент тултарчĕ.

Бунинск поселокĕн совечĕ квартал планне 185,7 процент пурнăçларĕ. Чăваш Тимеш тата Келĕмкасси ялсовечĕсем финанс планне 159—163 процент тултарчĕç. Халиччен юлса пынă Туçа ялсовечĕ те ĕçе лайăххăн тăратрĕ. Çамрăк финагент Михайлов юлташ тăрăшса ĕçленипе, ялсовет пĕрремĕш кварталти финанс планне 135 процент тултарчĕ.

Финанс работникĕсен хушшинче халĕ иккĕмĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешӳ пуçланчĕ.

Н. Михайлов.

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ

ТАВАЙ. Тĕмерти «Смидович» колхозри драмкружок смотра хатĕрленме тытăнчĕ. Кружока клуб заведующийĕ А. Якимов ертсе пырать. Кружокра пурĕ 20 çын ĕçлет. Вĕсен вăйĕпе кăçал спектакльсем чылай лартнă. «Нарспи» спектакль уйрăмах ăнăçлăн иртрĕ.

Г. Котяков.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

16. Хумханулла маршрут

Çапăçура хĕл иртрĕ.
Хĕрӳ çу кунĕ çитрĕ.
Тăванăм, эсĕ пултăн
Çĕр çирĕм вĕçевре.
Тĕтрe купипĕ урлă,
Хекава пĕрре витĕр
Çĕр çирĕм хут эс тухрăн
Çĕр çирĕм вилĕмрен.

Вилĕмпеле эс тăнă
Ялан та куçа-куçăн:
Анчах ялан çĕнтернĕ
Чĕр пурнăç вилĕме.
Хăюллă ăмăрткайăк,
Çунатлă çĕнтерӳçĕ,
Вутра та эс, шывра та
Çунма, путма пĕлмен.

Самолету пăрланнă,
Ал-уруна там илнĕ.
Винтсем пăра тĕпретнĕ,
Пăр çапăннă пите.
Ик куç тулли юн тулнă
Снаряд та пуля пинĕн
Сан чĕрене шыранă,
Шыранă сан ӳте.

Анчах та вăрçă çулĕ
Тамакри пек пулсан та
Самолета, тăванăм,
Аллу сан вĕçертмен.
Тӳпе тĕпрен кисреннĕ,
Тĕнче вутпа пăтраннă,
Çапах эс нихăçан та
Çурма-çула пĕлмен.

Эс çĕршыва саватăн,
Эс пурнăçа сыхлатăн.
Сана çӳле çĕкленĕ
Хăватлă юрату.
Халь эсĕ Атăл çийĕн
Çӳлте вĕçсе пыратăн,
Çĕршывăн юратăвĕ —
Вăл санăн çунатту.

Сана задани панă.
Хĕвеллĕ тӳпе тăрăх
Н. хулинчен вĕçетĕн
Тăван Мускавалла.
Маршрут выртать çап-çутă,
Çу кунĕ тăрă-тăрă,
Çуралнă Ямаш урлă
Паян сан каçмалла.

Мухтавлă Аслă Атăл,
Тӳлеккĕн те ачашшăн
Çĕршыв кăкри çинче вăл
Йăлтăртатса выртать.
Тискер те сĕмсĕр нимĕç
Атăл çине тухасшăн,
Вăл çĕршыва пăвасшăн
Выç кашкăр пек пыртан.

Юратнă Аслă Атăл,
Пирĕн тăван аннемĕр,
Эс пирĕнне упратăн
Чыса та тивĕçе.
Вилсен те, чĕрĕлсен те
Эс пирĕн ĕмĕр-ĕмĕр,
Вилсен те, чĕрĕлсен те
Памастпăр нимĕçе!

Орлов паян хаваслă.
— Ачсемĕр, юрă юрлăр!
Экипажне чĕнет вăл:
— Паян юрламалла!
Гастелло самолечĕ
Чăваш çĕршывĕ урлă

Чи хаклă тус-тăван пек
Вĕçет Мускавалла.

Тăват мотор кĕрлевĕ
Мухтавлă Атăл çийĕн
Юратнă çĕршыв тăрăх
Мăнаçлăн янăрать.
Тăван чăваш çĕршывĕ,
Тăванăмăр Россия,
Кунçулăмăр, хăватăмăр,
Телейĕмĕр санра.

Телейшĕн, çутă кушăн
Çĕкленнĕ Степан Разин.
Атăл çинче çуралнă
Хăюллă юрăсем.
Çава та сенĕ йăтнă
Чăваш çынни-пăлхавçă.
Атăлпала хăпарнă
Çилтăвăл кĕрлесе.

Телейшĕн, çутă кушăн
Хумханнă Аслă Атăл.
Пугачевпа çĕкленнĕ
Татах çĕнĕ хумсем.
Телейшĕн, çутă кушăн
Вĕçеççĕ халь, куратăн,
Пугачевпала Разинăн
Çунатлă йăхĕсем.

Ак Атăлăн вăрманĕ
Çыранĕсем пуçланчĕç,
Ешĕллĕхре çут Атăл
Кулать, йăлтăртатать.
— Пăхсам, Милостивенко,
Çĕр çинелле пăхсамччĕ.
Тăван чăваш çĕршывĕ
Мĕнле тӳлек выртать.

Пăхать Милостивенко —
Вутри Украина ывăлĕ,
Пĕр савăнăç, пĕр хуйăх
Куçĕсенче çиçет.
—Тăван чăваш çĕршывĕ
Вăл ĕмĕр лăпкă сывлĕ,
Федот, кунта нихăçан та
Кĕртместпĕр нимĕçе!

Çапла калать вăл хыттăн.
Сăмах янрать тупа пек.
Куç сиктермесĕр штурмăн
Пăхать шав çĕрелле.
Хăватлăн та мăнаçлăн
Пырать вĕсен карапĕ,
Тӳлек чăваш çĕрне вăл
Шанчăк кӳрсе кĕрлет.

Çĕрех пăхать Орлов та
Ун, чунĕ хумхануллă.
Хăй тусĕн çав сăмахĕ
Чĕрере вут чĕртет.
— Çапла, Милостивенко,
Сăмахху, тĕрĕс пулĕ,
Кунта ылханлă нимĕç
Кĕреймĕ ĕмĕрте!

Çапла вĕсен карапĕ
Мăнаçлăн шунăçемĕн
Республика пейзажĕ
Пуянлансах пырать.
Аçта авал вăрахăн
Упасем çеç ӳленĕ,
Унта заводăн корпусĕ
Кĕрнеклĕн хăпарать.

Аçта вăл асат хуçнăн
Ахлатнă сухапуçĕ,
Унта халь тырă тинĕсĕ
Тӳлеккĕн хумханать.
Унта халь илĕртӳллĕн
Вылять телей çăлкуçĕ,
Унта — этем хăватлă,
Хуçа вăл хăй кăна.

(Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетлеме пуçланă.)

(Малалли пулать).

Ют çĕршывсенче

Англи морякĕсене совет орденĕсемпе наградăлани

Майский юлташ каланă сăмах

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Лондонри Совет посольствинче Англи морякĕсене Англирен СССР-а хĕçпăшал турттарса килнĕ вăхăтра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн совет орденĕсемпе наградăланă пирки йышăну пулса иртнĕ.

Орденсем панă вăхăтра пулнă хăнасем хушшинче тинĕс-çар министрĕ Александер, флот адмиралĕ Дадли Паунд, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Брекен, çавăн пекех ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн яланхи заместителĕ Кадоган, Великобританин тинĕс-çар тата суту-илӳ флочĕн нумай представителĕсем те пулнă.

Орденсене Совет послĕ Майский юлташ панă. Хăйĕн кĕске сăмахĕнче вăл халăхи вăрçăра тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе усă курма кирлине, Великобританин тинĕс-çар флочĕ тата суту-илӳ флочĕ пысăк вырăн йышăннине паллă тунă.

Шыв айĕнче пыракан вăрçăра Англия çĕнтерессине хăй шанса тăнине палăртса, малалла Майский çапла каланă: „Тинĕсре пулса пыракан паттăр çапăçура Англирен, Канадăран, США-ран СССР-а хĕçпăшал, боеприпассем тата тĕрлĕрен хатĕрсем илсе çитерекен çурçĕрти карапсен караванĕсен ĕçĕ уйрăмăнах паллă вырăн йышăнса тăрать", тенĕ.

Англин уйрăмăнах палăрнă хăшпĕр морякĕсене Совет правительстви орденсем парса хисеплеме йышăннине палăртса, Майский юлташ малалла çапла каланă: „Вăрçă çĕнĕ тапхăра куçрĕ. Юлашки ултă-çичĕ уйăх хушшинче пĕрлешӳллĕ нацисем чылай паллă тата нумай шанма май паракан çитĕнӳсем турĕç. Хĕрлĕ Çарăн хĕллехи наступленийĕ, Сталинград патĕнче çав тери паллă çĕнтерӳ тунипе вĕçленнĕскер, пĕтĕм вăрçа улăштаракан тапхăр пулса тăчĕ, Англин 8-мĕш армийĕн Африкăри пысăк ăнăçăвĕсем те çав енпех пынă, вăл ăнăçусене „Пушхирти çĕнтерӳ" ятлă кинофильмра çав тери уççăн палăртнă. Тунисра вĕçленсе пыракан çар операцийĕсем тăшмана тата тепĕр хут вăйлăн пырса çапасси çинчен калаççĕ. Çак фактсем вĕсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Германие „çĕнтерме çук" тенине аркатса тăкнă. Пĕрлешӳллĕ нацисем пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç наступленилле анлă операцисем тума хатĕрленеççĕ. Юлашки вăхăтра Германипе Италие сывлăшран вăйлăн пырса тапăннисем те çавăн çинченех калаççĕ. Гитлерла Германия ытларах та ытларах оборонăллă позици йышăнса пырать. Çакă, паллах, фронтăн хăшпĕр участокĕсенче вăл наступлени тума пултараймĕ, тени пулмасть. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче наступлени тума пултарать-ха вăл. Анчах та çĕнтерӳллĕ маршсем тăтăшах пулса пырасси тата тытса чармалла мар çĕнтересе илсе пырасси унăн пĕтрĕç ĕнтĕ. Халĕ Берлинра гитлерла банда хăй пĕр çын юлмиччен хӳтĕлеме пулнă Европа çирĕплĕхĕ çинчен нумай калаçать. Гитлер пĕтĕм тĕнчере хăй пуç пулса тăрасси çинчен шухăшлани нумай пулмасть-ха. Берлинра халĕ тата тĕрлĕ „валсем" çинчен, „Атлантика", „Хĕвеланăç", „Хĕвелтухăç" „валĕсем" çинчен калаçма юратаççĕ, çав валсем Европăн гитлерла крепоçне ыттисем пырса кĕресрен хӳтĕлеççĕ пулать вара. Мажино линийĕн психологине нимĕç фашисчĕсен пуçĕсенче чĕртсе яни ахальтен пулнă япала мар пулас! Нимĕçсемшĕн ку ырă паллă мар. Хальхи вăрçă пире мĕн те пулин вĕрентрĕ пулсан, чи малтанах вăл пире тĕнчере пысăк кĕме май паман нисепле „валсем" те çуккине кăтартса пачĕ. Пĕрлешӳллĕ нацисем Гитлера çакна хăй вăхăтĕнче кăтартса парĕç-ха.

Асăннă паллăсем пирĕншĕн питĕ усăллă пулин те, вăрçăра эпир çĕнтертĕмĕр ĕнтĕ, тесе шутлани каçармалла мар йăнăш туни пулнă пулĕччĕ. Тăшман, чăнах та, ăнăçсăрлăхсем курчĕ, поражениссем тӳсрĕ. Унăн нумай çын тата нумай техника пĕтрĕ. Вăл пысăк территорисене каялла парса чакрĕ. Анчах тăшман çавах та вăйлă-ха. Унăн çар машини çирĕп-ха. Унăн шалти фрончĕ те тĕрĕс-тĕкĕлех-ха. Донбасра нимĕçсем контрнаступлени туни тата Роммель Тунисра çирĕп тăни çакна лайăх кăтартса параççĕ. Пирĕн лăпланса лармалла мар. Татăклă çĕнтерӳ тăвасси çывăх мар, çĕнтерӳ тума союзниксен пĕтĕм вăйĕсене пĕтĕçтермелле, пур йышши хĕçпăшалсене те çирĕп пĕрлештермелле. Апла пулин те юлашкинчен эпир çĕнтересси пирки иккĕленӳ те пулма пултараймасть. Пулса иртекен вăрçă историйĕнче çывăхри уйăхсем пит паллă вырăн йышăнса тăмалла пулаççĕ. Пĕрлешӳллĕ нацисен армийĕсем, флочĕсем тата сывлăшри вăйĕсем килес çапăçусене вирлĕн хатĕрленеççĕ. Европăн тĕрлĕ пайĕсенче пысăк событисем хатĕрленеççĕ. Эпир çĕнтерес сехет çывхарса килет. Гитлерла Германи тавра ункă хытăрах та хытăрах пĕрĕнет. Çав ункă, юлашкинчен, гитлерла крепость тенине йăвантарса ярса Европăна ирĕке кăларасси патне илсе çитерĕ. Гитлерпа унăн банди темĕн тусан та вĕсем хăйсен кунçулĕнчен хăтăлаймĕç. Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе кăçалхи кампанире Хĕвеланăçĕнчи союзниксем çителĕклĕн пулăшассине шанса тăраççĕ".

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле саккăрмĕш арми Энфидавилль районĕнче тăшманăн позицийĕсене атакăланă. Хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн Англи войскисем Энфидавилле йышăнса илнĕ. Тăшманăн оборона линийĕн малти объекчĕсене тытса илнĕ. Çапăçу малалла пырать.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрель уйăхĕн пуçламĕшĕнчен çак тарана çитиччен Çурçĕр Африкăра Роммелĕн 130 йывăр транспортнăй бомбардировщик пĕтнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ШТЕТТИНА, РОСТОКА, БЕРЛИНА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Штеттинпа Ростока вăйлăн тапăннă. Çавăн пекех Англи самолечĕсем Берлина пырса тапăннă. Вăл операцисене (вĕсенчен 31 самолет таврăнман) 4 моторлă бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем туса ирттернĕ.

США-на ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ АПАТ-ÇИМĔÇ ЫЙТĂВĔСЕМПЕ ПУХАКАН ПĔРЛЕШӲЛЛĔ НАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ, СССР ДЕЛЕГАЦИЙĔ ПЫРСА ÇИТНĔ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă хыççăнхи апат-çимĕç ыйтăвĕсем тăрăх США пухакан пĕрлешӳллĕ нацисен конференцине— Вашингтона СССР делегацийĕ пырса çитнĕ. Делегаципе пĕрле тĕрлĕрен экспертсем пынă.

Конференцие майăн 18-мĕшĕнче Хот Спрингс хулинче (Виргини штачĕ) уçма палăртнă.

ШВЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ГЕРМАНИН ПИРАТЛА ĔÇĔСЕНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕНИ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕнче Швеци шывĕнче Германин суту-илӳ карапĕ Швецин подводнăй лодкине пеме пуçланă. Лодкăна вăл çурри шывра пулнă вăхăтра тапăннă. Çав ĕçе хăвăрт тĕпчесе пĕлме кирлине кăтартса, Швеци правительстви Германие çирĕп протест янă.

ФИНЛЯНДИРЕ ШАЛТИ ЙЫВĂРЛĂХСЕМ ӲСЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Суоман сосиалдемократти» ятлă финн хаçатĕнче финанс министрĕн заместителĕн Рейнеккăн выступленине пичетленĕ. Вăл Финляндире ирĕксĕрлесе сармалли икĕ тĕрлĕ заем кăларасси çинчен пĕлтернĕ. Анчах çак ĕç те, Рейнекка сăмахĕпе, «государство финансне йĕркелесе çитерме пулăшаймасть» тата сарăлса пыракан инфляцие чарма пултараймасть. Çавăн пирки та правительство халăх укçине тӳрремĕнех тытса илме хатĕрленет. Вăл ĕçе, Рейнекка сăмахĕ тăрăх, çапла майпа туса ирттермелле: пĕр-пĕр кун çӳрекен укçасем çине пурин çине те штемпельсем хурса тухмалла, унсăрăн укçа çӳреме пултараймасть. Штемпельсем хурса тухма хушнă финанс органĕсем çав вăхăтрах халăхран унăн укçин пĕр пайне тытса илмелле.

Финсен хаçачĕсенче тата тул çăнăхĕ пама чарни çинчен пĕлтерӳсем пичетлесе кăларнă. Май уйăхĕнче аш-какай памалли нормăна татах чакармалла.

Пирĕн земляксем

Совет Союзĕн Геройĕ Мирон Ефимов

Чăваш ялĕнче пĕр ача çитĕннĕ.

Тантăшĕсем ăна килĕштернĕ. Чунас тĕлĕшпе вăл пуринчен малта пулнă, тĕрлĕ упражненисем тăвас ĕçре те ăна çĕнтерекен пулман.

Летчик пуласси çинчен Мирон шутламанпа пĕрех. Журналсенче вăл паллă спорт мастерĕсен фотографийĕсене пăхма юратнă, унăн хăйĕн те спорт мастерĕ пулас килнĕ. Çав ĕмĕт ӳссе çирĕпленсех пынă. Мастер пулас пулсан, нумай ĕçлеме кирлине, çине тăрса тăрăшмалла пуллине лайăх пĕлнĕ вăл, анчах умринче лайăх пĕлнĕ вăл, анчах умри йывăрлăхсенчен хăраса тăман. Спорт ĕмĕтне час-часах урăх ĕмĕт хупланă: çĕнĕ çулсем уçса, çынсене паллă мар япаласене тĕпчесе пĕлес кăмăл пулнă унăн.

Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. Анчах çавах та спорт ĕçĕ асран кайман. Вара часах вăл физкультура институтне куçнă.

Пурнăç çулĕ сасартăк улшăннă.

Комсомол организацийĕ Ефимова вĕçевçĕсен шкулне яма палăртнă. Хисеплĕ сĕнӳрен пăрăнма Ефимовăн хал çитмен. Вара вăл авиашколăра вĕренме тытăннă, анчах хăй тĕрĕс тунипе тĕрĕс мар туни çинчен татăклăн хăй те калама пултарайман. Тепĕр çултанах вăл спортра паллă çын пулма пултарнă-çке-ха!

Вăрçă пуçланнă тĕле Ефимов летчик-испытатель пулса ĕçленĕ. Халĕ çитĕ вăл хăйĕн самолечĕпе тăван çĕршыва пысăк усă пама пултарнине тавçăрса илнĕ.

Аэродром çине çĕнĕ йышши машинăсем — ИЛ'сем анса ларнă. Летчиксем пурте вĕсене курма чупса пынă. — Лайăх машина, мĕн каласси пур, пĕçертĕ нимĕçсене, — илтĕннĕ сасăсем. Паллах, ку машинăсем Ефимова та питĕ килĕшнĕ. Нумай шутласа тăмасăрах вăл ИЛ çине куçарма командиртан ыйтма кайнă...

Ăна хăюлăхпа мастерлăх шкулне — Губрия эскадрильине янă. Вĕçевçĕ ĕçне вăл юратнă çемĕн юратсах пынă. Ĕç результачĕсем те куç умĕнчех: взрывсем, фашистсен вилĕ куписем, çулăм ялкăшнисем... Тăшманăн пуçĕ çинче çĕнтерӳллĕн, тăвăл пек çӳреме, фашистсем çине вилĕм тăкма питĕ аван! Çавăн пек самантсенче паттăр пек шутланă вăл хăйне-хăй. Самолетăн вăй-хăвачĕ, унăн хăвăртлăхĕ — хăйĕн хăвăртлăхĕ пек туйăннă ăна.

Хĕллехи пĕр ирхине Ефимова вăрçăччен хăй пĕлсе тăракан пĕр аэродром çине тапăнма ИЛ самолетсен пĕр ушкăнне илсе кайма задани панă. Аэродрома зенитнăй батарейăсем нумай сыхланине пĕлсе тăнă вăл. Çавăнпа та пĕрре кăна вĕçсе кĕрсе, сасартăк тапăнма кирли çинчен шутланă.

Ефимов тинкерсе карттă çине пăхнă. Вăл хăй паллакан вăрмансене, ялсене, сăртлă вырăнсене аса илнĕ... Шĕвĕр вĕçлĕ карандашпа Ефимов маршрутăн кукăр йĕррине тăвать те, карттăна хăйпе пĕрле вĕçмелле çынсене парать.

Ĕç — палăртса хунă пекех пулса пынă. Вăрттăн вĕçсе пырса фашистсем тавçăрса иличчен виçĕ самолет аркатса та тăкнă вĕсем. Каялла вĕçсе каякан ИЛ-сем хыççăн нимĕçсем пеме пуçланă. Аэродром çинче аркатайман самолетсем нумай юлни кăна кăмăла хуçнă. Ефимов пуçне шухăш пырса кĕнĕ. «Халех, фашистсем тавçăрса иличчен тепĕр хут кĕрсе, бомбăсем тепĕр хут пăрахас мар-ши?»

Капла тума май та çук пек. Зенитнăй орудисен кĕпçисем çӳлелле кăмтараççĕ, постсем пурте асăрхаса тăраççĕ. Сасартăк епле тапăнăн çавăн пек чухне?

Самолет хăвăрт вĕçни шухăша та васкатать. План тăвасси, шухăша пур енчен те йĕркелесе çитересси — — çĕр çинче çакăн валли темиçе сехет тăрăшса ĕçлемелле пулнă пулсан, сывлăшра вăл ĕçе Ефимов темиçе секунда хушшинче туса çитернĕ.

Самолет çуначĕсемпе сулласа хăйĕн хыççăн вĕçекенсене асăрхаттарнă. Вунă-вунпилĕк километр хушши вăл малтанхи пекех хамăр еннелле вĕçнĕ. Нимĕçсем вара штурмовка пĕтрĕ тесе шутланă. Унтан Ефимов фашистсен куçĕнчен пачах çухалнă. Вăл каялла çаврăнса питĕ аялтан вĕçсе пынă та, малтанхи енченех аэродром çине вĕçсе кĕрсе тăшман çине бомбăсем тăкма пуçланă.

Ĕç питĕ ăнăçлăн иртнĕ. Çĕр çинчен пĕрре те персе курайман. Вĕсемчен тата тепĕр пилĕк самолета вут хыптарнă.

Тăшманăн сакăр самолетне пĕтерни çеç мар Ефимова савăнтарнă. Çак боевой машина çинче вăл хăйĕн тахçанхи шухăшне пурнăçлама: тĕпчесе пĕлме, çĕнĕ çулсем шырама юратнине пурнăçлама пултарнă. Халĕ ĕнтĕ вăл летчик çеç те мар, штурмовка тăвассин çĕнĕ тактикине тĕпчекен тата çĕнĕ машинăн пултарулăхне сăнакан çын та пулнă. Çакна ăнланса илнĕ хыççăн вăл хăйĕн ĕçне тата ытларах юратма пуçланă.

Хăйĕн шухăшне вăл кирлĕ вăхăтра пит хăвăрт ĕçлеме хăнăхтарнă. Йывăр операци ирттерме каякан унăн тусĕ майор Куников пĕррехинче телефонпа ăна çапла каланă:

— Эсĕ, тусăм, хăвăн ăмăрткайăкусемпе пулăш-ха пире. Задачăна сана каласа парĕç, эпир, санăн тусусем, çĕр çинче пулнине кăна асăрха эсĕ. Çак кунсенче пĕрле çапăçар: эпир — çĕр çинче, эсир — сывлăшра.

Чăннипелех пулăшнă Ефимов хăйĕн тусне. Вăл хăйĕн ĕçне çав тери тĕплĕн тунипе фашистсене каялла чактармалла тунă. Вăл кунне виçшер хут вĕçсе тухнă, фашистсем патне пулăшу илсе пыма паман.

Вĕçсе кайнă чухне унăн Куников валли парашютсăрах боезапас пăрахса памалла пулнă. Куников отрячĕ çинелле фашистсем питĕ вăйлăн персе тăнă. Пĕр çын курăнсанах фашистсем пулеметсенчен шатăртаттарма, минăсемпе артиллерирен персе тăма тытăннă.

Ефимов шутласа илнĕ вара: боезапаса уçă вырăна пăрахас пулсан, боецсене пырса илме питĕ хĕн пулĕ. Вăл вара питĕ аялтан вĕçсе пырса чуллă сапур хыçне боезапаса питĕ типтерлĕ лартса хăварнă. Ку ĕçе тума, паллах, питĕ йывăр пулнă.

Вилĕме куçа-куçăн тĕл пулма та лекнĕ Ефимова. Мессершмитт йышши самолет атакăланă хыççăн унăн самолетне вут хыпса илсен вилĕм куç умĕнчех пулнă. Парашютпа сикме май пулман. Пĕртен-пĕр çул — самолет ăшĕнче çунса каясси кăна тăрса юлнă. Мессершмитт унăн умне пырса тухнă, кабинăран нимĕçĕн тискер пичĕ курăнса кайнă. Çунакан самолетра пулин те Ефимов ăна пулеметпа шатăртаттарма тытăннă. Мессершмитта персе тивретнĕ пирки фашист-летчикĕ хăранипе пуçне пĕкнĕ те тарса хăтăлма хătланнă. Яланхи пекех Ефимов пурне те шута илсе решени йышăннă. Нейтральнăй газ панă — çулăма сирме пулмасть-ши? Вара тинĕс еннелле анма тытăннă — çунса кайиччен, шыва путса вилни авантарах пулĕ,—шутланă вăл.

Çухалса кайманни, хăйне тыткалама пĕлни çăлнă ăна. Самолета пĕр енчен тепĕр еннелле вырттарса вăл çулăма сӳнтернĕ те, итлеме чарăннă самолета чиперех антарса лартнă. Вилĕм кая тăрса юлнă.

Çакăн пек вĕçӳсенче Ефимовăн паттăрлăхĕ ӳссе пынă. Вăл тăшманăн 17 самолетне, 19 танкне, 500 автомашинине пĕтерсе тăкнă, виçĕ пин фрица леш тĕнчене ăсатнă.

Çапла вара ăнсăртран тенĕ пек авиацие лекнĕ çын хăй пурнăçĕн тупсăмне тупма пултарнă, хăйĕн пултарулăхне аталантарнă. Çапла вара чăваш ачи Ефимов Совет Союзĕн Геройĕ пулса тăнă.

А. ИВИЧ.

(«Красный Черноморец» хаçатран).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Карточка бюровĕ апрелĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа май уйăхĕ валли çăкăр карточкисем парать.

14-мĕш номерлĕ почта ещĕклĕ объекта гл. бухгалтер, счетовод, экономист, кадрсем енĕпе тата мобилизаци енĕпе ĕçлекен инспектор, слесарьсем, электромонтерсем, машинистсем, электросварщиксем кирлĕ.
6—02 номерлĕ телефонпа (икĕ звонок) 8 сехетрен пуçласа 10 сехетчен тата 17 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать. 5—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ЧТ 1032 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.